Çур аки

# «Тухăç никĕсĕнче – паха та сывă вăрлăх»

Çапла пуçларĕ калаçăва «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ Алексей Семенович СЕМЕНОВ. Çĕр ĕçĕнче пуян опыт пухнăскер, çулсенчи агроном ял хуçалăхĕнчи паянхи йывăрлăхсен ытларах пайĕ çĕр ĕç технологине пăхăнманнинчен тухса тăнине те яр уççăнах курать. Технологие пăхăнманранах иртнĕ çул чылай хуçалăх планпа пăхнă чухлĕ тыр-пул туса илеймерĕ. Пулнă пысăк çитменлĕхсенчен çаксене палăртмалла: ĕçре малтанхи çул мĕнле культура акнине шута илменни, çĕре кирлĕ пек хатĕрлеменни, çум курăкĕпе кĕрешменни, çĕнĕ технологисене çул паманни, вăрлăх пахалăхĕ çине тимлĕх уйăрманни, удобренисемпе кирлĕ чухлĕ ĕçлеменни т. ыт. те.

Уйрăммăн вăрлăх сывлăхĕ çинче чарăнса тăрас килет. Тĕрлĕ чир-чĕр ытларах вăрлăх урлă усен-тăрана куçать. Çапла вара чирлĕ вăрлăх акнипе кĕр çитсен тухăç кĕтнĕ пек пулмасть, чир-чĕр çеç ытларах сарăлать. Çур акине тухиччен паянхи куна илсен те пĕтĕмпех таса та сывă вăрлăх çук. Апла пулсан пур чир-чĕрпе кĕрешме те хатĕр пулмалла. Мартăн 6-мĕшĕ тĕлне районти 12 хуçалăх çуртри вăрлăхĕн 43 партине фитоэкспертизăна тăратрĕ. Кашниййĕнех чир паллисем пур.

Çак тĕрĕслеве пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: хуçалăхсен пĕр центнер вăрлăх та химилле препаратсемпе имçамламасăр акма юрамасть. Кунта çакна каласа хăварас килет. Вăрлăхра тĕрлĕрен чир-чĕр 30 процентран ытла мар пулсан, ăна имçамлама «Планриз» препаратпа усă курни вырăнлă. Планриз ўсен-тăрансен шурă янкар чирĕнчен, ўсен-тăран тутăхĕнчен, фитофторозран, тырăна тымартан çĕрессинчен уйрăмах лайăх хўтĕлет. Препарат пахча çимĕç культурисем çинче те эффективлăхпа палăрса тăрать. Планриз çын сывлăхĕшĕн те, чĕр чунсемшĕн те, усăллă фаунăшăн та сиенлĕ мар. Акмалли вăрлăха пĕр-икĕ кун малтан е акнă кун имçамламалла. Çĕр улми вăрлăхне – 10-12 кун маларах.

Хальхи вăхăтра хуçалăхсем валли тырăна имçамламалли препаратсем çителĕклех сутаççĕ. Çавăнпа та мĕнле препаратпа ĕçлессине хуçалăхра агрономăн суйласа илмелле, вырăнта кирлĕ пек йĕркелесе ĕçлеттермелле.

Вăрлăх тырăна пур хуçалăхра та çине тăрсах имçамламалла. Мĕнле препаратсемпе усă курмалла-ха ку тĕлĕшпе?

Çурхи тулăна ТМТД, СП пĕр тонна вăрлăх çине 1,5-2,0 кг, «Виал-ТТ», «ВСК» – 0,3-0,4 кг, «Дививдентстар» – 1,0 кг, «Премис», «КС» – 1,2 кг ярса имçамламалла. Пĕр тонна вăрлăх çине 10 литра яхăн раствор пулмалла. Ку препаратсем тулă çинче тĕрлĕрен вутпуççинчен, тымарсем çĕресрен тата ытти чирсенчен сыхлаççĕ. Урпашăн тонна пуçне «Виал-ТТ», «ВСК» препаратсем 2,3 кг кирлĕ. Сĕлĕ вăрлăхне имçамлама çавăн пекех «Премис», «КС» препаратсем тонна пуçне 1,5 литр пулни вырăнлă.

Вăрлăх имçамланă çĕрте хăрушсăрлăх техники пирки те манма юрамасть. Унта ĕçлеме ятарласа хатĕрленĕ, сывлăха тĕрĕслеттернĕ çынсене çеç явăçтармалла. Ĕçе пуçăниччен вĕсене хăрушсăрлăх техникипе паллаштармалла. Кашни çыннăн тивĕçлĕ ĕç хатĕрĕ, ятарлă тум-тир, респиратор-куçлăх пулмалла.

Çур акине туллин хатĕрленни кĕр çитсен пысăк тухăçпа каялла çаврăнса килĕ.

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШЎЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРТРИ ВĂРЛĂХĔН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ (АПРЕЛĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх кирлĕ. 2. Тĕрĕслеттернĕ (центнерпа). 3. Кондицилллĕ вăрлăх (процентпа). 4. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе. 5. Вăл шутран тасалăхпа. 6. Çум курăк вăррисемли. 7. Шăтаслăхпа (центнерпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1820 | 1820 | 62 | 700 | 700 | 613 | – |
| «Волга» | 600 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Восток» | 1110 | 1110 | 85 | 162 | 162 | 162 | 0 |
| «Герой» | 1880 | 1905 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Агроурожай» | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 450 | 300 | 0 | 300 | 300 | 300 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 1900 | 1900 | 77 | 440 | 320 | 320 | 120 |
| ВТМ | 300 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 1480 | 400 | 75 | 100 | 100 | 100 | 0 |
| «Лидер» | 1100 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 2020 | 2000 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Передовик» | 1460 | 1170 | 68 | 375 | 322 | 322 | 53 |
| «Свобода» | 3400 | 3520 | 81 | 670 | 320 | 320 | 350 |
| «Сеятель» | 980 | 379 | 59 | 155 | 155 | 0 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 2210 | 2210 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Рассвет» | 2000 | 1694 | 64 | 606 | 606 | 606 | 0 |
| «Ударник» | 4230 | 4663 | 87 | 600 | 600 | 600 | 0 |
| «Хлебороб» | 580 | 377 | 42 | 220 | 220 | 77 | 0 |
| Чапаев яч. хич. | 1620 | 1713 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Чемеево» | 960 | 1040 | 85 | 160 | 160 | 0 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 1020 | 1220 | 97 | 40 | 40 | 40 | 0 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 1500 | 1285 | 0 | 1285 | 1285 | 1285 | 0 |
| КФХ Матвеев | 300 | 222 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Бархаткин | 150 | 242 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Мольков | 0 | 20 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Ямангеев | 0 | 50 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Сретинский | 150 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **33220** | **29240** | **80** | **5813** | **5290** | **4745** | **523** |

Республика кунĕ умĕн

# *Раççей Геройĕ – лицеистсен юлташĕ*



Тĕрлĕ ăрури çынсем пĕрпĕринпе туслă çыхăну тытни кашнинех малтуртăмлă утăм тума май парать, ўсĕмсен çулĕпе пыма хавхалантарать. Çак тĕрĕслĕхе «Муркаш лицейĕ» муниципаллă вĕрентў учрежденийĕнчи лицеистсемпе вĕрентекенсем курса-пĕлсех тăраççĕ, ăна çухатас марришĕн пĕрле пулса пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Иртнĕ кунсенче кунти кадетсен класĕсенче пĕлў пухакансене тата ытти лицеистсене патриотикăлла воспитани парас тĕллевпе лицей ертўçисем хăнана Раççей Геройне Евгений Германович Борисова чĕнчĕç. Мĕн кĕтни пурнăçланчĕ – кадет класĕсенче вĕренекен хĕрсемпе яшсен куçĕсенче шурă ăмсану çуралчĕ. Хăйсенчен нумаях та аслă мар арçын çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа РФ Геройĕн ылтăн медальне тивĕçни пурнăçра кашнин валлиех паттăрлăх вырăнĕ пуррине систерчĕ. Çакă кадетсем хускатнă ыйтусенченех курăнчĕ: ача чух мĕнле кĕнекесем вуланă, паттăрлăх пирки ĕмĕтленнĕ-и, вилĕмпе пурнăç чиккинче пулнă чух уйрăмах мĕн шухăшлаттарнă? Е. Борисов тĕл пулăвăн пĕрремĕш минутĕнченех ачасемпе сывăх çыхăну йĕркелени вĕренекенсене кашни ыйту çинех тулли хурав илме пулăшрĕ.

Паттăрлăх... Пурнăçăн кашни кукăрĕнчех пур ăна валли вырăн. Акă лицейре пĕлтĕрпе кăçал кадетсен класĕ сумлă аталанса кайнине илер-ха. Çак аталанура кашни лицеист-кадетăн тўпи пур. Хăв ăс пухакан вĕрентў учрежденийĕн чыс-сумне çĕклени паттăрлăх мар-и вара? Çакнашкал хирĕçле ыйтупа тухрĕ те кадетсем патне вĕсен пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашнă хыççăн Женя Борисов.

Лицеистсен ўсĕмĕсем вара куç умĕнчех. Акă кăçал районта иртнернĕ предмет олимпиадисенче лицейре вĕренекенсем призлă 24 вырăн йышăнма пултарнă. Вĕсенчен пĕрремĕш вырăнсем – 11, иккĕмĕш вырăнсем – 10, виççĕмĕшсем – 3.

10 «Г» класра вĕренекен К. Троицкая республикăри предмет олимпиадинче 3-мĕш вырăна тухни те, лицеистсем районти наукăпа практика конференцийĕнче малти вырăнсене 5 йышăнни те, районти çамрăк армеецсен хĕллехи спартакиадинче лицеистсем 1-мĕш вырăна тухни те пысăк ўсĕм.

ЧР Вĕрентўпе çамрăксен политикин министерствин 2006 çулхи январьти 41-мĕш номерлĕ приказĕпе Муркаш лицейĕнче çак çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче 5 яшпа 2 хĕртен кадетсен ушкăнне йĕркелерĕç. Кадетсем пĕрремĕш кунранпах хăйсене ырă енчен кăтартнине районта пĕлеççĕ ĕнтĕ. Вĕсем вара çĕннинчен çĕннине шыраççĕ. Нумаях пулмасть вĕсене наркотик тĕрĕслевĕпе ĕçлекен федераллă службăн Чăваш Республикинчи управленийĕ хăйĕн 5 çулне уявлама пуçтарчĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Макаров тăрăшнипе мартăн 22-мĕшĕнче кадетсен корпусĕ ЧР ШĔМ музейĕнче пулса курчĕ. Палăртмалла, кунта та Муркашсем ялти шкулсенчен малтан çитнисем пулчĕç. Çак кунах лицеистсем И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ ирттерекен «Лицейская весна» конкурса хутшăнчĕç. 11 «Г» класри М. Ершова юрăç-лицеистсем хушшинче 1-мĕш вырăна тивĕçрĕ.

Çакнашкал тăрăшулăх кăтартакан лицеистсемпе кадетсем февралĕн 16-мĕшĕнче республика шайĕнче иртнернĕ «Раççейăн çамрăк таланчĕсем» конкурсра «Вĕрсе каламалли кĕвĕ» номинацире 2-мĕш вырăн йышăннинчен тĕлĕнме кирлех-ши?

Паян лицеистсем пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене хатĕрленеççĕ. Районти шкулсенче 9-мĕш класран вĕренсе тухакансем вара лицеистсемпе кадетсен мал туртăмлăхне курса апрелĕн 12-мĕшĕнче Муркашри лицейре вĕренме экзаменсем тытса хăйсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслеме пултараççĕ: гуманитари çулне суйласа илекенсен – вырăс чĕлхипе тата литературипе, Раççей историйĕпе; естествăлла наука çулне суйлакансен – математикăпа тата физикăпа, кадетсен класĕнче вĕренес текенсен – физкультура тесчĕ витĕр тухмалла. Условисемпе тĕплĕнрех лицейре тата район хаçачĕн мартăн 15-мĕшĕнчи номерĕнче паллашма пулать.

– Сирĕн кунта вĕренме пур условисем те çителĕклĕ. Вĕренĕр, çителĕклĕ ăс пухăр. Çĕршывăмăра тарăн пĕлўллĕ специалистсем кирлĕ. Хăвăр пĕлĕвĕрпе тивĕçлĕ усă курма пултарни – сирĕн умри пĕрремĕш паттăрлăх. Сирĕн çакна тумаллах, – терĕ юлташланнă ачасемпе сыв пуллашнă май РФ Геройĕ Евгений Германович Борисов.

Паттăр каланă паттăрла сăмахсене çамрăксем тĕрĕс ăнланĕç тесе шутлатăп. Çапла пултăрччĕ те.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

01 асăрхаттарать

# *Ачасем шăрпăкпа ан выляччăр*

Çурхи ăшă кунсем кашни ачашăн кĕтнĕ самант. Сывлăха çирĕплетеççĕ вĕсем, аслисене пулăшаççĕ. Йăлтах йĕркеллĕ темелле, анчах çурхи ирĕке туйса илнĕ ачасем алла шăрпăк тытсан, унта та кунта аслисем куриччен вут тивертме тăрсан-хăтлансан...

Юлашки çулсенче ачасем шăрпăкпа вылянинчен вăй илнĕ пушарсем çине-çинех пулчĕç, кĕске самантрах çĕршер-миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕл пулса вĕçрĕ. Акă виçĕм çул ачасем шăрпăкпа вылянинчен 2 пушар тухнăччĕ пулсан, пĕлтĕр кунашкал тĕслĕхсем районта 5 пулчĕç. Тавралăх юртан тасалнă май типĕ курăк пушар хăрушлăхне ўстерет. Шăрпăкпа çурт-йĕртен инçетре выляс та типĕ курăкпа айхашса çулăм пўрт-çурт патне çитет, аслисем вуншар çул тар юхтарса тунă пурлăха кĕл тăвать. Çакна ачасен те, ашшĕ-амăшĕсен те, вĕрентекенсен те манас марччĕ, пĕр-пĕрне асăрхаттарсах тăрасчĕ. Çурхи кунсем кăçал типĕ курăкпа пуян пулнăран асăрханулăха ўстересси малти вырăна тухмалла тесе шутлатпăр.

Пушар пурлăхсăр пуçне çын пурнăçне те шелленменнине кашниех аван пĕлетпĕр, анчах пурпĕрех пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмастпăр. Çапла вара кăçалхи виçĕ уйăхра кăна район территоринче регистрациленĕ 4 пушарта 2 çын пурнăçĕ татăлчĕ. Кашниех ўсĕр пуçпа пирус туртнă чух асăрханулăха çухатнă.

Вут-кăвар тетте мар тетпĕр те, анчах унпа выляма кăмăллакансем пурри пире питĕ шухăшлаттарать. Кунашкал ачасем пирки шалти ĕçсен сотрудникĕсем ĕçлеме пуçласан выляв суд тенкелĕ çине илсе çитерме пултарни пирки манас марччĕ. Ашшĕ-амăшĕсен те, вĕрентекенсен те ачасене кĕсье телефонĕсемпе пушар чаçне тўлевсĕр шăнкăравсем туса çула тухма чĕнни пысăк преступлени пулни пирки ăнлантарасчĕ. Ахальлĕн Раççей Федерацийĕн Административлă йĕркене пăсни çинчен калакан Кодексĕн 19.13 статйипе килĕшўллĕн 01, 02, 03 тата ытти ятарлă службăсене суйса çула кăларакан «паттăр» ачасен административлă майпа пысăк штраф тўлемелле пулса тухма пултарать. Штрафĕ штрафпа та, анчах суя чĕнў вăхăтĕнче чăннипе пулăшу кĕтекен пулсан, çăлакансем унта вăхăтра çитейменшĕн кам айăплă пулать? Ку ыйту çине кашни вулакан хăй хурав парасса шанатăп.

**И. СМИРНОВ,**
**районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе

Ачасем пирĕн пуласлăх тетпĕр те вĕсем çине пысăк шанчăк хуратпăр. Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров та çак ыйтăва самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасть. «Ачасемпе амăшĕсем пирки шутланинчен ытларах таса пулăм çук. Ачамăрсен пурте йĕркеллĕ пулни тата ашшĕ-амăшĕсем вĕсемшĕн савăнни – общество сывлăхĕн тĕп кăтартăвĕ. Çак тĕллевпе аталанать паянхи Чăваш Республики» – çапла унăн гражданла позицийĕ. Палăрăмлă ку шухăш Президент Патшалăх Канашне янă кăçалхи Çырура та тĕп вырăнта. Вăл 2008 çула Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе йышăнни те чăваш халăхне ырă кăмăлпа малалла аталанма чĕнни. Ырă ĕçсен çулталăкне хутшăнса йĕркелерĕ те хăйĕн кăçалхи «Вут-çулăм тата ачасем» конкурсне районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн профилактика пайĕ.

Ачасенче пушар хăрушсăрлăх культурине аталантарассипе патшалăх интересĕсене пурнăçа кĕртсе, ўсекен ăрăвăн общество шайĕнчи пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе гражданла позицине йĕркелесе ирттерекен конкурс ырă йăлана кĕнĕ тăрăх кăçал та февраль-март уйăхĕсенче иртрĕ. Районти нумай шкулсемпе ача сачĕсем хутшăнчĕç унта, кашниех профилактика ĕçне хăйĕн тўпине хывсрĕ, ирĕке кайнă вут-çулăм епле хăрушă пулăм пулнине хăйсен алă ĕçĕсенче кăтартрĕ. Иккĕленместĕп, çак конкурса активлă хутшăннă ачасем шăрпăкпа выляс çуккине, çак çултан юлташĕсене те пăрасса, ял çыннисемпе ачасем хушшинче пушар хăрушсăрлăх правилисене анлăрах сарма пулăшасса шанатăп. Ачасем! Сирĕн аçăр-аннĕрсем ирлесе ĕçе кăмăллă кайса ăшă кулăпа таврăннинче эсир пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнни тĕп вырăн йышăнать. Кунашкал конкурссем малашне те пулĕç. Унта эсир татах та активлăрах хутшăнасса кĕтетпĕр.

Халĕ вара конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем. Палăртма кăмăллă, конкурса районти пур шкулсем те хутшăнчĕç. Конкурс ирттерекен комиссие пĕтĕмлетў тума пĕрре те çăмăл пулмарĕ. Уйрăм ачасен ĕçĕсем хушшинче Турайри вăтам шкулта вĕренекен Екатерина Герасимова, Юнкăри С. Михайлов ячĕллĕ вăтам шкулти Инесса Михайлова, Александр Иваков ĕçĕсем палăрăмлăрах пулни курăнчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Сосновкăри вăтам шкулта вĕренекен Зоя Ивановапа Шуркассинчи шкул-садра пĕлў пухакан Ольга Иванова. Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлў паракан шкулта вĕренекен Александра Петровапа Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Марина Иванова виççĕмĕш вырăнта.

Коллективлă ĕçсем хушшинче Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулта 4-мĕш класра вĕренекенсем çĕнтерчĕç. Хыççăнхи вырăнсенче Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулти ачасемпе Юнкăри С. Михайлов ячĕллĕ вăтам шкулти 3-мĕш класс ачисем.

Асăннă конкурса кăçал шкул çулне çитмен ачасем активлă хутшăнни тĕлĕнтерчĕ. Çак мал туртăмлă воспитани ĕçне хутшăнса, шкул çулне çитмен ачасен 8 учрежденийĕ ырă ята тивĕçрĕ. Вĕсем: «Мечта» (18 ĕç), «Солнышко» (16 ĕç), «Улыбка» (5 ĕç), «Василек» (18 ĕç), «Золушка» (24 ĕç), «Путене» (6 ĕç), Катькассинчи шкул-сад (4 ĕç), «Малыш» (5 ĕç). Кунта аслă çулхисем хушшинче Данил Дашков («Солнышко»), Максим Огадеров («Мечта») çĕнтерчĕç. Настя Тихонова («Малыш»), Рома Иосифов («Солнышко»), Слава Илларионов («Солнышко») иккĕмĕш вырăнсем, Ксения Каргина («Мечта») тата Алексей Обручников (Катькассинчи шкул-сад) виççĕмĕш вырăнсем йышăнчĕç.

Вăтам ушкăнри ачасенчен алă ĕçĕсене Николай Блинов («Солнышко»), Татьяна Павлова («Золушка») ăнăçлăрах тунă тесе йышăнас, пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсем парас. Рома Васильев («Василек»), Яна Николаева («Улыбка»), Августина Степанова («Золушка»), Саша Максимов («Путене») ĕçĕсем виççĕмĕш вырăна тивĕçрĕç.

Кĕçĕн çулсенчи ачасем те аслисенчен юлмарĕç. Кунта Даша Яковлевана («Василек») çитекенни пулмарĕ. Иккĕмĕш вырăнта Карина Ивановапа («Василек») Марсель Кузяков («Мечта»). Виктор Егоровпа Настя Васильева тата Маша Яковлева (пурте «Василекран») виççĕмĕш вырăна пайларĕç.

Çĕнтерўçĕсем Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хуралĕ обществăлла организацин (ВДПО) Хисеп грамотисемпе хаклă парнесене тивĕçрĕç.

Хамăн сăмахăма Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулта 4-мĕш класра вĕренекенсен сăмахĕсемпе вĕçлес тетĕп:

«Вутран-çулăмран
Хăраман пиччесем,
Асăнмалăх парне
Илĕрсем пирĕнтен».

Тавах çын ĕçне шута хума пултаракан ачасене. Вĕсем тĕрĕс воспитани илсе çĕршыва юрăхлă çынсем пуласси пирки иккĕленў çук.

**О. ЕФИМОВА,**
**37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн профилактика инструкторĕ.**